20-мĕш çул тухать. Хаке 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 6 ВЫРСАРНИКУН 208 (6143) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хăвăртлатмалла

Пирĕн республикăри чылай колхозсем кăçал хăйсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул çитĕнтерчĕç. Сентябрĕн 1-мĕш тĕлне Вăрнар тата Калинински районсем кĕрхипе çурхи тырăсене ăнăçлăн вырса пуçтарчĕç. Элĕк, Вăрмар, Канаш, Çĕрпÿ, Етĕрне районĕсем çуртыррин юлашки гектарĕсене выраççĕ. Чылай колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене те начар мар пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çитес çулхи тырпулăн никĕсне ăнăçлăн хывса, кĕрхи тырăсене акас тĕлĕшпе государство планне тултарнă районсемпе çĕршер колхозсем халĕ планран ирттерсе ыраш, кĕрхи тулă акаççĕ. Кăçал кĕртыррисем акса хăвармалли çĕрĕн лаптăкне Канаш районĕ 1.300 гектар чухлĕ пысăклатрĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра, агротехникăллă лайăх сроксенче акса хăварчĕ. Кĕрхи тырăсене акас ĕçе Вăрмар, Шупашкар, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр районĕсем те çак кунсенчех вĕçлеççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, райçĕрĕç пайĕсемпе колхозсен правленийĕсем умне халĕ халăх хуçалăхĕнчи тепĕр пысăк та ответлă задача — кĕрхи çĕртме тăвасси тухса тăчĕ.

Малта пыракан колхозсен нумай çулхи опычĕ çакна кăтартса парать: кĕрхи çĕртме туса хăварнă çĕр çинче тырпул уйрăмăнах вăйлăрах пулать. Кĕрхи çĕртме тунни — çуракки ĕçĕсене çăмăллатать, ăна хăвăртрах иртттерме пулăшать. Пĕлтĕр Хĕрлĕ Чутай районĕ кĕрхи çĕртме планне 105,7 процент тултарнă. Çак район кăçал çуракине республикăра пур районсенчен те малтан вĕçлерĕ, çуртыррисене вăхăтра, лайăх пахалăхпа акса хăварчĕ. Çапла вара Хĕрлĕ Чутай районĕ кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 2,5 — 3 центнер тырă пĕлтĕрхинчен ытларах туса илет. Çак районри «Красная звезда» тата ВКП(б) ячĕпе тăракан колхозсем кăçал кашни гектартанах 16—17 центнер тырă пухса кĕртеççĕ. Куславкка районĕнчи «Путь социализма», «Коммунар», «Большевик», Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан колхозсем çуртыррисене кĕрхи çĕртме туман çĕр çине акса хăварчĕç. Çавăнпа вĕсенче тырпул та начартарах çитĕнчĕ. Кĕрхи çĕртме туса вăхăтра акнă тырăн тухăçлăхĕ 10 процент чухлĕ ытларах пулать.

Пĕлтĕр хăшпĕр колхозсен руководителĕсем кĕрхи çĕртме тăвассине уборка ĕçĕсен хыçне тăратса хăварчĕç. Иртнĕ çул çак ĕçре пулнă йăнăшсене кăçал пĕр колхозăн та тумалла мар. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кăçалхи августăн 22-мĕшĕнче йышăннă постановленире кун пирки хытă асăрхаттарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Улатăр, Куванкино тата Пăрачкав районĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, ытти районсене августăн 25-мĕшĕнчен пуçласа кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунлăх заданисем çирĕплетсе панă. Унтанпа иртнĕ икĕ пилĕккунлăхра çав заданисене республикăри районсем тултарайман. Ку тĕлĕшпе иртнĕ çул малта пынă Хĕрлĕ Чутай районĕ те пĕрремĕш пилĕккунлăхра 400 гектар çине çĕртме тăвас вырăнне 96 гектар çине çеç тунă. Ишлей, Элĕк, Красноармейски тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем çĕртме тумалли малтанхи пилĕккунлăхри задание 2—5 процент çеç пурнăçланă. Первомайски, Тăвай, Вăрнар районĕсем ку ĕçе пачах та тытăнман.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç республикăра юлса пыни районсенчи чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене черетпе туса пынинчен килет.

Хăшпĕр районсен тата колхозсен руководителĕсем: çуртыррисене вырас, кĕрхи тырăсене акас ĕçсене вĕçлесен çеç кĕрхи çĕртме тума тытăнатпăр, тесе шутлаççĕ пулас. Тырăсене вырас плана 99 процент пурнăçланă. Элĕк районĕ малтанхи пилĕккунлăхра кĕрхи çĕртме пурĕ те 8 гектар çинче çеç, иккĕмĕш пилĕккунлăхра 113 гектар çинче çеç тунă. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ панă график тăрăх районăн çак икĕ пилĕккунлăхра кĕрхи çĕртме 1.350 гектар çинче тумалла пулнă. Кĕрхи çĕртме тăвасси юлса пынине ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ «лаша вăйĕ тивĕçменнипе» ăнлантарса пама пăхать. Ĕç тата турттăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухсан, ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене тунипе пĕр вăхăтрах кĕрхи çĕртмене те ăнăçлăнах тума пулать. Малта пыракан колхозсем çапла тăваççĕ те. Вăрмар районĕнчи «Атнаш», «Париж коммуни», Куславкка районĕнчи «Путь Ленина», «Красный курган» колхозсем кĕрхи çĕртме тума уйрăм çынсемпе лашасене çирĕплетнĕ. Вĕсем ку ĕçре çĕртме туса пĕтеричченех ĕçлеççĕ. Куславкка районĕнчи «Путь Ленина» колхоз (колхоз председателĕ Маркин юлташ) кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунлăхри заданисене ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Сентябрĕн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче республикăри колхозсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх иртет. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, райçĕрĕç пайĕсемпе колхоз правленийĕсен çак вунăкунлăхра кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе те вăйлатмалла. Района тата колхозсене кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе панă пилĕккунлăхри заданисене вăхăтра пурнăçласа пымалла. Кашни колхозра тата бригадăра кĕрхи çĕртме тума уйрăм çынсемпе лашасене çирĕплетмелле. Уборка ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн çак ĕçе колхозсенчи турттăм вăйне ытларах явăçтармалла.

Кăçал кĕрхи çĕртмене пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех лашасен вăйĕпе тума тивет. Çавăнпа ку ĕçе МТС вăйĕпе пурнăçласса шанса пурăнакан колхоз председателĕсем пысăк йăнăш тăваççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсен тата ялсоветсемпе колхозсен председателĕсен кĕрхи çĕртме тунă чухне агротехника правилисене пăсма памалла мар. Кĕрхи çĕртмене тракторпа 16—18 сантиметр, лашапа 12—14 сантиметр тарăнăшĕ сухаламалла. Лайăх сухалани агротехника правилисене пăсни пулать.

Кĕрхи çĕртме тăвасси — халăх хуçалăхĕнчи питех те пысăк вырăнта тăракан задача. Ку тĕлĕшпе государство панă плана пурнăçлассишĕн чи малтанах ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ответлă. Анчах Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çĕртме тăвас ытгупа халĕ çителĕклĕ ĕçлемест-ха.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Капан тăвакан тата авăн çапакан бригадăсем тунă

КУКЕÇ, сентябрĕн 4-мĕш. (Телефонпа). Уборкăра фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха районри колхозсем пурте хутшăнчĕç. Çак вунăкунлăхра вырăнти организацисене тата колхоз правленийĕсене пулăшма район центрĕнчи партипе комсомол активĕнчен 48 çын ялсене кайрĕç.

Уборкăри ĕçсене хăвăртлатас шутпа пур колхозсенче те ятарласа капан тăвакан тата авăн çапакан бригадăсем тунă.

Паянхи куна уйрăм колхозсем тырăсене капана хывса пĕтерчĕç. Шĕнер ялсоветĕнчи «Молния» колхоз кĕлтесене йăлтах капана хыврĕ, çак кунсенчех авăн çапас ĕçе вĕçлет. Заводски ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз кĕртыррисене çапса пĕтерчĕ, пур тырăсен кĕлтисене те капана хывас ĕçе вĕçлесе çитерет. Апаш ялсоветĕнчи колхозсенче кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

Тулик Хураски ялсоветĕнчи «Малалла» колхоз çак кунсенче государствăна обязательнăй йĕркепе тырă тăратас, натуроплата тÿлес тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас плансене тултарчĕ.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

ЭЛĔК, сентябрĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Фронтовой вунăкунлăха хутшăннă хыççăн, районри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене чылай хăвăртрах туса пыма тытăнчĕç. «XVI партсъезд», «Хĕрлĕ ялав», «Шуçăм» колхозсен членĕсем кĕлтесене капана хывнă çĕрте кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. «XVI партсъезд» колхоз (колхоз председателĕ Гордеев юлташ) кĕлте турттарса капана хывас ĕçе ĕнер вĕçлерĕ, тепĕр икĕ кунтан кĕрхипе çурхи тырăсене çапса пуçтарать. «Красная заря» колхозра кĕлтесене капана хывас тĕлĕшпе çĕрле те ĕçлеççĕ. Ялсоветра ĕçлекенсем, пурĕ 12 çын, çĕрлехи вăхăтра алăпа çĕклесе 7 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă. Районĕпе ĕнерхи кун тĕлне 7.025 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 4.921 гектар тыррине çапса пуçтарнă.

Уборка ĕçĕсенче кая юлнă колхозсене пулăшу паратпăр. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пуçлансан, Молотов ячĕпе тăракан колхоза юнашар колхозран тырă вырас ĕçе вĕçлеме 3 жнейка янă. Унсăр пуçне МТС пĕр комбайн ярса парать. Çак колхозăн кĕрхи тыррисене акма «Хăват» колхоз икĕ касăллă 6 плуг, 12 лаша уйăрса панă. Çавăн пекех Ленин ячĕпе тăракан колхоза «Красная заря», «Самолет» колхозсем пулăшаççĕ. Çапла вара тырă вырас, кĕрхи тырăсене акас ĕçсене сентябрĕн 6-мĕшпе 7-мĕшĕнче пĕтĕмĕшпех вĕçлетпĕр. Паянхи кун тĕлне районри 92 колхозран 87-шĕ çуртыррисене вырса пĕтернĕ.

М. КУЗЬМИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малта пыракан бригадăра

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Кăташри «Пионер» колхозра тăваттăмĕш бригада (бригадирĕ çамрăк хĕрача О. Николаева юлташ) малта пырать. Ку бригадăра 45 çын. Вĕсем ĕçе пĕр харăс тухаççĕ, ĕçе тухма чĕнессине кĕтмеççĕ. Вĕсем тул çутăлнă çĕре итем çине тухаççĕ те çĕрлеччченех унта ĕçлеççĕ.

Бригада тăрăшса ĕçленипе 31 гектар çинчи ыраша капана хывса лартрĕ, 28 гектар çинчен çуртыррисене пухса кĕртрĕ, вăл шутра 6 гектар çинчен пухнă пăрçана çапса тирпейлерĕ. Ку бригадăра тăккаланчăксене сийĕнчех пухса пычĕç. 60 çулхи колхозница К. Константинова ертсе пынипе пионерсем уйран 5 лав пучах пухса кĕртрĕç.

Уборкăра ĕçленĕ çĕрте А. Алексеева, М. Долгова, И. Румянцева юлташсем нормăна 200-шер процент тултарса пычĕç. Çуртыррисене вырнă çĕрте жнейкăпа 16 çулхи И. Степанов ĕçлерĕ. Вăл норма тăрăх кунне 4 гектар вырмалла чухне 7-шер гектар вырса пынă. Пионер Н. Алексеев сложнăй молотилкăпа авăн çапнă çĕрте барабанщик пулса ĕçлет. Сменăра 500 пăт çапмалла пулсан, вĕсем 1000 пăт çапаççĕ. Çапса хатĕрленĕ тырра сийĕнчех хатĕрлев пунктне леçсе параççĕ. Ку колхозри шкул ачисем колхозниксене хаçатсем вуласа кăтартаççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Евгений Иванов колхозниксем хушшинче фронтри эпизодсене, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа парать. Вăл стена хаçачĕ 7 номер кăларнă.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра Кăташ колхозĕнче тата хĕрÿллĕнрех ĕçлеме тытăнчĕç. Уборкăна хăвăртрах вĕçлес тесе, колхозниксем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

И. ЛЬВОВ.

Колхозсене учет ĕçĕнче пулăшар

Шупашкар хулинчи предприятисемпе учреждениссенчи шутĕç работникĕсен çырăвĕ

Хаклă юлташсем! Пирĕн тăван çĕршыв хăрушă кунсенче пурăнать. Урнă тăшман пирĕн çĕршывăн пурнăç центрĕсем патнелле туртăнать. Çĕршывăн кăнтăр енче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç хаяр çапăçу пырать. Кавказшăн, Атăлшăн, нефтьшĕн, тырпулшăн, пирĕн хуласемпе ялсемшĕн кĕрешÿ пырать. Украинăна çаратса пĕтернĕ хыççăн, фашистсен выçă вăрăхурахĕсем татах та нумайрах çаратма Донпа Кубань çывăхĕнчи çеçенхирсене пырса кĕчĕç. Тăшман тырпуллă пуян вырăнсене тапăнать. Вăл пире хавшатасшăн, апат-çимĕç тĕлĕшпе йывăрлăх кÿресшĕн. Çавна тума памăпăр!

Хĕрлĕ Çар воинĕсем, хăйсен юнĕпе пурнăçне хĕрхенмесĕр, совет çĕрĕн кашни пусăмне геройла хÿтĕлеççĕ, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа пĕрле хамăрăн юратнă тăван çĕршыва сыхлама мĕнпур совет халăхĕ çĕкленчĕ. Заводсемпе фабрикăсенчи рабочисем ырми-канми ĕçлесе, вăхăта-мĕне пĕлмесĕр, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлесе, фронт валли хĕçпăшал туптаса хатĕрлеççĕ. Колхоз хресченĕсем те çавăн пекех фронтпа çĕршыва апат-çимĕç тата промышленность валли чĕртавар ытларах парассишĕн тăрăшаççĕ.

Колхозсемпе совхозсем кăçал вăйлă тырпул ÿстерчĕç. Çакă вара тылри кашни совет çыннине, Хĕрлĕ Çарăн фронтри кашни воинне савăнтарать. Колхозниксемпе колхозницăсем умĕнче халĕ хăйсен колхозĕсенче тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртес задача тăрать. Тырпула уйхиртен пухса кĕртмелле çеç мар,—ăна çапмалла, сыхласа упрамалла, кашни пĕрчĕне шута илмелле. Пирĕн çакна асра тытас пулать: ытларах пухса кĕртнĕ апат-çимĕçĕн кашни килограмĕ—вăл тăшмана çапни пулать.

Вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи çак задачăна совет, парти тата комсомол организацийĕсем, колхозсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртес ĕçре оперативнăй учета, отчетноçа лайăх туса пыни, колхозсен финанс хуçалăхне йĕркеллĕ тытса пыни çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Эпир, Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисен бухгалтерĕсемпе счетоводĕсем, хуласемпе район центрĕсенче шут ĕçĕнче ĕçлекенсем, учет ĕçне тата отчетноçа кăтартуллă йĕркелеме колхозсене пулăшма пултаратпăр. Уйрăмах бригадăсен тата колхозăн ялхуçалăх ĕçĕсене шута илме, ĕç мĕнле пынине шута илме тата тырпулсене звеносем, бригадăсем тăрăх шута илсе тухма, плансене иртттерсе тултарнăшăн, тырпул тухăçне тата выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçне хăпартнăшăн колхозниксене ĕçкунĕсем çине хушса тÿлессине йĕркелеме пулăшăпăр. Эпир колхозсен финанс хуçалăхĕнче кирлĕ пек йĕркелĕх тăвас ĕçре пысăк усă кÿрĕпĕр.

Эпир, Шупашкар хулинче шут ĕçне тăвакансем, Шупашкар, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсене шефа илетпĕр, колхозсене тăтăшах кайса çÿренипе ялхуçалăх ĕçĕсене оперативно шута илсе пыма, ĕçленине, тырпулсене тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене шута илсе пыма колхоз счетоводĕсемпе бригадирĕсене пулăшма пулатпăр. Колхоз счетоводĕсене учет ĕçне тĕрĕс туса пыма вĕрентсе, колхозăн финанс хуçалăхĕнче çирĕп йĕркелĕх тума пулăшмашкăн сăмах паратпăр.

Эпир Чăваш республикинчи предприятисемпе учрежденисен бухгалтерĕсемпе счетоводĕсене пурне те пирĕнтен пример илме чĕнетпĕр.

Пуху хушнипе алă пусатпăр:

Чăвашгосстрахăн главнăй бухгалтерĕ **СОСНИНА**, Чăвашсоюз президиумĕн главнăй бухгалтерĕ **ШАПОШНИКОВА**, Наркомхозăн старши бухгалтерĕ **ВИНОГРАДОВА**, «Росглаввино» совхозĕн главнăй бухгалтерĕ **БАХАРЕВ**, Промсоюзăн главнăй бухгалтерĕ **СВОБОДОВА**, Госбанкăн Чăваш конторин главнăй бухгалтерĕ **АНДРЕЕВ**, Госбанкăн Чăваш конторин кредит отделĕн начальникĕ **ПРОКОПЬЕВА**, Техноткацки фабрикăри главнăй бухгалтерăн заместителĕ **ВИНОКУРОВА**, Наркомфинăн старши инструкторĕ **ГАГАРНИКОВ**, Чăвашпромкасса бухгалтерĕ **АФАНАСЬЕВА**.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Хĕрлĕ ялавлă цех, смена, бригадăсем

КАНАШ, сентябрĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 4-мĕш уйăхĕ — август — иртрĕ. Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ вагонсем юсакан заводри жюри çак кунсенче цехсен, сменăсен тата бригадăсен ăмăртăвĕн августри итогĕсене пăхса тухрĕ. Жюри цехсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне вагонсем юсакан цех аллинчех (начальникĕ Коломиец юлташ) хăварма йышăнчĕ. Ку цех августри вагонсем юсамалли государственнăй плана 42 процент иртттерсе тултарнă.

Сменăсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Маркова сменинчен илсе, Егорушкин сменине (Сосновский юлташ ертсе пыракан цех) пама йышăннă. Егорушкина смени, шĕрмаях талăкри график тăрăх ĕçлесе, уйăхри задание 115 процент тултарнă.

Бригадăсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Чесов юлташ ертсе пыракан бригада аллинчех хăварнă. Бригада иртнĕ уйăхра заданирен иртттерсе 7 вагон юсанă, ĕç тухăçлăхне, нормăра кăтартса панине тапламшатарсан, 409 процента çитернĕ.

Заводри комсомол комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Черемухин юлташăн фронтовой бригади илнĕччĕ. Августра комсомолецсемпе çамрăксен Степанов юлташ ертсе пыракан бригади мала тухрĕ. Çавăнпа жюри ВЛКСМ комитечĕн ялавне Степанов юлташăн бригадине пама йышăнчĕ.

Уйăхри ăмăрту итогĕсем çакăн çинчен калаççĕ: пам тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе çĕнĕ çитĕнÿсем тăвать — çавă ялава хăйĕн аллинчех хăварать. Çавăнпа та тунă ĕçсемпе лăпланса ларма юрамасть, çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешес пулать.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем Будапешт, Кенигсберг хулисенчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă

Сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ, метеорологи енĕпе йывăр условисенче, вĕçсе кайса, Будапешт тата Кенигсберг хулисенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Будапешт хулинче 33 пушар тухнă, вĕсенчен 9-шĕ пысăк пушарсем пулнă, вĕсем вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

Кенигсберг хулинче 24 пушар тухнă. Пилĕк çĕрте вăйлă взрывсем пулнине палăртнă.

Пирĕн самолетсем пурте, пĕр самолетсăр пуçне, хăйсен базине таврăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Сталинградран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, **Новороссийскран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, **Моздок** районĕнче çапăçусем туса пынă тата **Ржев** районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче пăллă улшăнусемех пулман.

Балтика тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн пĕтĕмпе 37.000 тонна водоизмещениллĕ 4 транспортне тата нимĕçсен 2 миноносецне путарнă.

* * *

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вăйлă çапăçусем пынă. Нимĕçсем хаяррăн атакăланă, вĕсен атакисене пирĕн боецсем сирсе янă. Уйрăм участоксенче пирĕн чаçсем противника пыра-пыра çапнă, çавна пула нимĕçсен фашистла войскисем пысăк çухатусем тÿснĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем хаяр çапăçура нимĕçсен 18 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ тата 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн бронебойщиксем тимлĕхпе тавçăрулăх кăтартаççĕ. Малта асăннă Н-ски чаçри противотанковăй пăшалсен пĕр подразделенине нимĕçсен 40 танкĕ атакăланă. Совет боецĕсем тăшмана çывăха янă та унăн танкĕсене пере-пере çĕмĕрме тытăннă. Нимĕçсем виçĕ хут атакăланă, кашни хутĕнчех вĕсене пирĕн бронебойщиксем тĕл персе чарнă. Çав çапăçура нимĕçсен 12 танкне персе çĕмĕрнĕ. Клетская районĕнче пирĕн чаçсем активлăн çапăçса хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хĕрÿллĕн çапăçнă. Нимĕçсем çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртсе пынă. Противника малалла куçма чарса лартнă. Хăйсене активлăн хÿтĕлесе, пирĕн боецсем тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине çĕмĕрсе ватса параççĕ. Пирĕн оборонăна савăлланса кĕнĕ гитлеровецсене совет танкĕсемпе пехоти атакăланă. Пуçланса кайнă çапăçура нимĕçсен 11 танкне тата 600 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери нимĕçсем пухăнса тăнă вырăнапеме тытăннă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Пирĕн тинĕс çинчи пехота, Хура тинĕсри флотăн суднисен артиллерийĕ пулăшса пынипе, нимĕçсемпе румынсен войскисене атакăланă. Нимĕçсен 6 танкне, 15 орудине, 22 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине икĕ батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Н-ски часть хаяррăн çапăçнă хыççăн çĕнĕ позицисем патне чакнă.

Моздок районĕнче шыв рубежĕ урлă каçнă гитлеровецсене хирĕç çапăçнă. Пирĕн войскăсем противника хĕснĕ.

* * *

Нимĕçсен 61-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 176-мĕш полкăн 12-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Якоб Рогачник çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтра 176-мĕш полка вырăссем пыра-пыра çапрĕç те, полк питех те пысăк çухатусем тÿсрĕ. Эпĕ фронта 805-мĕш запасной полкăн 2-мĕш батальонĕпе пĕрле килтĕм. Пире 176-мĕш полка пулăшма васкаса ячĕç. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн 250 çын вилчĕ е аманчĕ, урăхла каласан—пĕтĕм батальонăн çуррине яхăн пĕтрĕ. Ларутăрăва сыхласа хăварас тесе, командовани малти позицисене тылри службăра тăракан мĕнпур салтаксене ячĕ. Вырăссем мĕн тери вăйлă пыра-пыра çапнине тÿссе курнă салтаксем çак ылханлă вăрçăра чĕррĕн тухасса шанми пулчĕç. Германирен нумаях пулмасть килнĕ салтаксем çапла каласа пачĕç: Браунсбергра аманнă хыççăн сывалнă виçĕ салтак, вĕсене каллех Российăна ярасси çинчен илтсен, çав кунах çакăнса вилнĕ».

* * *

Вилнĕ нимĕç салтакĕ Людвиг çумĕнче Боттропран пĕр Гильда ятлă хĕрарăм çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Кунтан, Боттропран, каллех нумай çынна илчĕç. Камăн аллипурисем пур—пурне те илеççĕ. Çапла ĕнтĕ, вăрçă пире нумай хĕнхур кăтартрĕ. Кунта кашни кунах хуйхăллă хыпарсем килеççĕ... Сире йывăр, анчах пирĕн пурнăç та питех те хăрушă. Мана пурнăç йăлтах йăлăхтарса çитерчĕ, эпĕ хама хам тем туса пăрахма пултаратăп».

Сентябрĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Сталинградран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, **Новороссийскран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче палăллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçри боецсем, артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе хатĕрленсе, противник вырнаçса тăнă çĕре çĕмĕрсе кĕнĕ. Нимĕçсен 4 танкне, 6 орудине тата 9 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 270 вилли выртса юлнă. Трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра нимĕçсен пехоти, танксем пулăшса пынипе, Н-ски чаçăн позицийĕсене атакăланă. Противотанковăй пăшалсенчен персе, гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пăрахса, пирĕн боецсем нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Танксен хÿтлĕхĕсĕр тăрса юлнă гитлеровецсене пулеметсемпе винтовкăсенчен пере-пере вĕлернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хĕрÿллĕ çапăçусем пулса пынă. Противникăн танкĕсемпе пехоти татти-сыпписĕр атакăланисене пирĕн войскăсем сире-сире пăрахнă, çав çапăçусенче гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ. Пĕр участокра кăна нимĕçсен 9 танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр чугунçул станцийĕшĕн иккĕмĕш талăк ĕнтĕ вăйлă çапăçу пырать. Пирĕн чаçсем ку участокра тăшманăн атакисене сире-сире пăрахнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Артиллерин Н-ски чаçĕ противникăн йышлă вăйĕсем пухăнса тăнă çĕре вăйлăн пенĕ. Нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 15 автомашинине çĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçри боецсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен персе нимĕçсен 4 танкне, 7 орудине тата минометсен 4 батарейине пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем противникăн аэродромĕсем çине ăнăçлăн вĕçсе пыра-пыра тапăннă. Аэродромсенчен пĕрин çинче нимĕçсен 30 самолетне çити пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ. Кунсăр пуçне совет истребителĕсем сывлăшри çапăçура противникăн 4 самолетне персе антарнă. Противникăн тепĕр аэродромĕ çинче совет летчикĕсем нимĕçсен 20 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен вилнĕ офицерĕн дневникĕнчен уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Противникăн 15 танкĕ çÿлĕ вырăнта тăрать, вĕсем мĕнпур хĕçпăшалсенчен переççĕ. Çакă вăл питех те хăрушла самант пулчĕ... Ирхине вырăссем артиллерирен персе хатĕрленме тытăнчĕç. Татах çапăçу пуçланса кайрĕ... Тÿсме çук шăрăх, çитменнине тата вырăссен бомбардировщикĕсем сывлăшран киле-киле тапăнаççĕ, çавна пула 5-мĕш рота çуррине яхăн хăйĕн командирĕпе Шернепе пĕрлех пĕтрĕ. Çапла ĕнтĕ, çак кунăн итогĕ питех те хурлăхлă—батальонра 137 çын вилнĕ, 200 çын аманнă».

* * *

Нимĕçсен 323-мĕш пехотнăй дивизийĕн 593-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Георг Шнаубер çумĕнче унăн амăшĕ Дармштадтран янă çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «Ĕнер эпĕ вырăссем кунта, Модак фабрикинче, хуппипе пĕçернĕ çĕрĕк çĕрулмипе тăранса пурăнни çинчен пĕлтĕм. Вĕсене çавăн пек апат-çимĕç хăстарать. Ытти фабрикăсенче ĕçсем пĕре те кунтан уйăрălса тăмаççĕ тесе калаççĕ».

* * *

Фронтра çавтери пысăк çухатусем тÿснине пула Финляндире çитĕннĕ арçынсене пурне те çара илнĕ. Рабочисем çук пирки вăрман завочĕсем тата хут промышленноçĕн предприятийĕсем нумайĕшĕсем хупăнса ларнă. Туркури çар суднисем тăвакан верфьре те рабочисем 60 процент кăна тăрса юлнă. Çĕршывра выçлăх сарăлать, тырпул вырмасăрах пĕтет, мĕншĕн тесен ăна пухса кĕртекен никам та çук. Финляндин Гитлера сутăннă правительсем финсене выçăпа вилсе пĕтесси патне илсе пыраççĕ.

Çамрăксен пĕтĕм вăйне—тăшмана çĕмĕрсе тăкма

Н. МИХАЙЛОВ

ЦК ВЛКСМ Секретарĕ

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери XXVIII [illegible] пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă обстановкинче пулнă [illegible]. Гитлерпа унăн ирсĕр шайкки халăхсене [illegible] вăрçа кĕртсе ячĕç. Юнлă Гитлер пĕтĕм [illegible] пĕтерсе тăкма, [illegible] нумай государствăсене пĕтерсе тата [illegible] туса ха[illegible].

Гитлеровецсем хăйсен ĕссĕр идейине, пĕтĕм тĕнчере [illegible] пурнăçа кĕртме хăтланни халех ĕнтĕ [illegible] нумай çамрăксен пурнăçне пĕтерчĕ [illegible]. Гитлер пуçласа янă [illegible] халиччен пулман-ха. Совет Союзне Германи хушшинче пыракан вăрçă [illegible] çын ытла [illegible] Германи 10 миллион çын ытла [illegible] çамрăксен [illegible].

Миллионшăр [illegible] халăха фашистсен чуралăхне [illegible] бандин юнлă ĕçĕсем.

Вăхăтлăха нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсенче миллионшар çамрăксене концентрациллĕ лагерьсене хупса лартнă. Моравия округĕнче вырнаçнă çав лагерьсенче хупса лартнă çынсем мĕнле пурăннине «Ново време» хаçат кăçалхи августăн 22-мĕшĕнче тухнă номерте акă мĕнле çырса кăтартать:

«Лагерьсенче çамрăксен пурнăçĕ пĕр пек иртсе пырать. Талăкра 14 сехет хушши вĕсем йывăр ĕçре — çулсене тунă тата юсанă çĕрте, çĕр ĕçĕнче ĕçлеççĕ, начар апатсăр пуçне хăйсен ĕçĕшĕн нимĕн те илмеççĕ».

Штитаре хулинче ачасене те пулин лагере хупса лартнă. Çав хаçатах çапла çырнă: «Пилĕк таран çарамас ачасем, вĕри хĕвел çунтарса янăскерсем, ирех пуçласа çĕр ĕçĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕç тухăçлăхĕ пысăках мар, анчах та çав пĕчĕк рабочисене тытса усрасси юмахри пек йÿне ларать».

Хальхи вăрçă иртнĕ вăхăтри мĕнпур вăрçăсенчен тĕпренех уйăрăлса тăрать. Пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан çамрăксем хăйсен наци чыслăхĕпе ирĕклĕхне хÿтĕлесе хăварса никама пăхăнмасăр пурăнĕç-и, е фашистсен чуралăхне лексе вилсе пĕтĕç-и, — çак ыйтăва халĕ нумай çĕршер çул валли татса памалла.

Пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан çамрăксем пурте нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешме пĕрлешнине çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ. Çак çамрăксен пуçĕнче совет çамрăкĕсемпе хĕрачисем пыраççĕ.

Ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкас тесе, совет çамрăкĕсем паттăррăн кĕрешнине, вĕсен героизмне, вĕсем тăван çĕршыва тата халăха чĕререн парăнса тăннине, вĕсем кирек мĕнле жертвăсем тума та тата кирек мĕнле йывăрлăха çĕнтерме те хатĕр тăнине питех те нумай фактсемпе кăтартса пама пулать. Совет çамрăкĕсем çак вăрçăра калама çук нумай, çавтери чаплă героизм кăтартаççĕ, çакăн пек героизма вăрçăсен историйĕ пĕлмен-ха. Çакна тăватă фронтра наградăланисен хисепĕнче комсомолецсем 24 пин çын ытла пулни те уççăн кăтартса парать.

Нумаях та пулмасть правительство совет партизанĕсен кĕрешĕвне пысăккăн хакларĕ, вĕсене Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăларĕ. Совет Союз Геройĕн званине панă 9 партизанран виççĕшĕ — Стрелец, Куриленко, Рябок юлташсем — комсомол членĕсем. Комсомолецсем хушшинчен хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр кĕрешекен чаплă геройсем ÿссе çитĕнеççĕ, вĕсем хăйсен паттăрлăхĕпе тата хăюлăхĕпе мĕнпур çамрăксене хавхалантарса ертсе пыраççĕ. Лиза Чайкинăна, Александр Чекалина, Зоя Космодемьянскаяна аса илер-ха, вĕсен геройлăхне халăх ĕмĕрлĕхех юрăсемпе халлапсене, легендăсене кĕртсе хăварчĕ, вĕсен паттăрла ĕçĕсене курса пирĕн çамрăксем вĕренсе çитĕнеççĕ.

«Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ валли!» текен лозунг пирĕн пĕтĕм халăх лозунгĕ пулса тăчĕ, вăл çамрăксен пурнăçĕпе ăс-тăнне тарăннăн кĕрсе вырнаçрĕ. Тылри çамрăк патриотсем хăйсен ĕç кунне çав лозунгпа пуçлаççĕ те çав лозунгпа вĕçлеççĕ.

Двухсотниксен движенийĕ, фронтовой бригадăсем, тимĕр-тăмăр пухасси, перекетлăхшĕн кĕрешесси, государствăна малтанхи тырра хĕрлĕ обозсемпе лесесси, çамрăк рабочисене массăллăн вĕрентсе хатĕрлесси, воскресниксем туса ирттересси, танксемпе самолетсем, бронепоездсем тума укçа-тенкĕ пухасси — совет çамрăкĕсен çакнашкал нумай тĕрлĕ пуçарулла ĕçĕсенче чăнчăн патриотсен пархатарлă шухăш-кăмăлĕсем, вĕсем хăйсен мĕнпур вăйĕсене Тăван çĕршыва пама хатĕр тăни тарăннăн палăраççĕ.

Отечественнăй вăрçăн нумай фрончĕсенче пĕтĕмĕшпех комсомолецсемпе çамрăксенчен пухса йĕркеленĕ тата комсомолецсем пухнă укçа-тенкĕпе пăларан ирттерсе туса кăларнă техникăпа ĕçпиталланнă подразделенисем нумай тĕл пулма пулать.

Новосибирск, Куйбышев, Мускав комсомолецĕсем тунă самолетсен эскадрильисем тăшмана сахал мар пыра-пыра çапнă. Фронтра Челябинск комсомолĕн ячĕпе тăракан 96-мĕш танковăй бригада çапăçать. Комсомолецсенчен тăракан Н-ски авиаполк нумай çĕршер вĕçевсем тунă. Фронтăн участокĕсенчен пĕринче Мускав комсомолецĕсен гвардейски минометнăй полкĕ хастах çапăçава кĕме хатĕр тăрать.

Совет çамрăкĕсем фронт валли çĕнĕрен çĕнĕ хĕçпăшалсем ыйăнма пĕлмесĕр туптаççĕ. Казахстан çамрăкĕсем çывăх вăхăтсенчех Хĕрлĕ Çара 45 танкран тăракан колонна параççĕ, саратовецсем — самолетсен эскадрильине, горьковчансем — танксен бригадине, молотовецсем — тăватшар орудирен тăракан 16 батарея параççĕ тата ыт. те.

Совет çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çара хăйсен чи лайăх ывăлĕсене ăсатаççĕ. Вăрçа пула пирĕн çĕршывра пурне те çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлессине пуçарса яни часах çулталăк тултарать. Çак çулталăк хушшинче всевобуч подразделенийĕсем çамрăк патриотсене çĕршер пин çынна фронта ăсатрĕç, çав çамрăк паттăрсем тăшмана мĕнле аркатса пĕтерсе пымаллине ĕçре кăтартса пачĕç.

Всевобуч подразделенийĕсенче комсомолецсемпе çамрăксенчен ятарласа пухса хатĕрленĕ формированисем пысăк вырăн йышăнчĕç. Çав формированисенчен кайнă боецсем нумайĕшĕсем: автоматчиксемпе минометчиксем, танксен истребителĕсем, пулеметчиксемпе снайперсем халĕ гвардеецсен ячĕсене илнĕ.

Юнлă гитлеризма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте совет çамрăкĕсене тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çамрăксем хĕрÿллĕн пулăшса тăраççĕ. Мускавра çамрăксен фашизма хирĕçле митингĕсем пулнă чухне, çав митингсен адресĕпе çамрăксен чикĕ леш енчи нумай тĕрлĕ организацийĕсенчен çĕршер саламсем илнĕ. Çав саламсенче пĕр шухăш-кăмăл — çамрăк совет патриочĕсен героизмĕпе çирĕплĕхĕнчен мĕнпур чун-чĕререн тĕлĕнсе савăнни, гитлеровецсене хирĕç совет çамрăкĕсемпе алла-аллăн тăрса кĕрешме хатĕр пулни курăнать.

Пурте пĕлеççĕ, халĕ Америкăри студентсен организацийĕсем чĕннипе Америкăна совет студенчĕсен делегацийĕ кайрĕ. Делегаци составĕнче — Красавченко, Совет Союзĕн Геройĕ Пчелинцев тата снайпер Людмила Павличенко юлташсем. Совет делегацине студентсен пĕтĕм тĕнчери Конгресне чĕнни — тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çамрăксем совет çамрăкĕсем çине ытларах та ытларах кăмăлласа пăхма пуçланине, Америка çамрăкĕсен анлă йышĕсем совет студенчĕсемпе тытакан çыхăнусене ытларах çирĕплетме ĕмĕтленнине кăтартса парать.

Нумай çĕршывсенчи çамрăксем иккĕмĕш фронта халех уçассишĕн тăраççĕ.

Англипе Америкăри тата ытти çĕршывсенчи малта пыракан çамрăксем, гитлеризма çапса аркатас тесен, резолюцисем йышăнни, сăмахсем тухса калани тата çак ыйтăва сÿтсе явни кăна çителĕксĕр пулнине ăнланаççĕ. Европа континенчĕ çинче халăх активлă кĕрешÿ пуçласа ямалла, çакă вара гитлерла Германие çапса аркатассине хăвăртлатма пултарĕ.

Тăшмана çĕнтерме пирĕн пур тĕрлĕ майсем те пур. Пирĕн Хĕрлĕ Çар вăрçăра опыт туянчĕ, вут-çулăмра пиçĕхсе çирĕпленчĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, пирĕн промышленность фронта хĕçпăшалсемпе боеприпассем, снаряжени ытларах та ытларах парса тăрать. Йывăр условисенче ялхуçалăхĕ çурхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Колхозсемпе совхозсем хальхи вăхăтра вăйлă тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, çапла вара тăван çĕршыва Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таран тырпул, апи-какай тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем парассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ.

Большевиксен партийĕ пире çапла вĕрентет: çĕнтерÿ тумалли майсем вĕсем хăйсем кăна çĕнтерÿ пулса тăраймаççĕ-ха. Çĕнтерÿ хăй тĕллĕн пулмасть, ăна тискер те урса кайнă тăшмана хирĕç пыракан вăйлă та юнлă, вилĕмле çапăçура çĕнтерсе илмелле.

Çĕнтерÿ тăвасси — вăл хамăрăн мĕнпур вăйсене хурса кĕрешмеллине, хамăрăн мĕнпур майсемпе вĕçне çитиччен усă курмаллине пĕлтерет. Совет çамрăкĕсемшĕн çакă вăл — хăйсен речĕсене татах та таччăнрах пĕрлештерме кирлине, тăшмана аркатса тăкса çĕнтерÿ тăвас ĕçе хăйсен мĕнпур вăйĕсене пама кирлине пĕлтерет.

Эсĕ заводра ĕçлетĕн пулсан, унта нормăна тултарман пĕр çамрăк рабочи те ан пултăр.

Эсĕ плана çĕр процентĕпех тултарнă тейĕпĕр, çав вăхăтрах санăн плана 150 процент тултарма майсем пулнă, çав майсемпе эсĕ усă курман — апла пулсан эсĕ начар ĕçленĕ. Тăшмана çапса аркатнă çĕрте вăрçă пур майсемпе те усă курма хушать. Ялхуçалăх ĕçĕсен халĕ чи хĕрÿллĕ те татăклă тапхăрĕ пырать. Ялти çамрăксен тĕп задачи — тырпулсене çывăх кунсенчех тырса пĕтересси, кĕлтесене капана хывассине, авăн çапассине, государствăна тырă парассине вĕçлесси пулса тăрать.

Хуларипе ялти çамрăксемшĕн пĕр пекех паха пулса тăракан тепĕр участок пур, çакă вăл — политикăллă воспитани ĕçĕ.

Вăрçă пула промышленноçа тата транспорт çине çамрăк рабочисем нумай пычĕç. Предприятин ĕçĕ ăнăçлă е ăнăçсăр пуласси не, производствăллă планăн ăнăçлăхне чылай çĕрте тенĕ пек çамрăксем татса параççĕ. Çамрăк рабочисенчен нумайĕшне мĕн çитмест-ха? Ĕçре дисциплинăллă та организованно пулни, хушнă ĕç çине ăнлануллăн пăхни çитмест. Çав çамрăксене политикăллă тĕрĕс воспитани илме пулăшасси, хăйсене дисциплинăллă пулма, умри тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса çирĕппĕн ĕçлеме хăнăху илнĕ çĕрте пулăшасси — пирĕн мĕнпур комсомол организацийĕсен пĕрремĕш черетре тăракан пархатарлă задачи пулса тăрать.

Вăрçă пуçланнăранпа комсомол ретне çамрăксем çĕнĕрен 2 миллион çынна яхăн кĕчĕç. Çакă ĕнтĕ вăл пирĕн комсомолăн совет çамрăкĕсем умĕнчи авторитечĕ мĕн тери пысăк пулнине, тăван çĕршывăн çак хаяр кунсем килсе тухнă самантра малта пыракан çамрăксем хăйсен пурнăçне Ленинла—Сталинла комсомолпа çыхăнтарас, унăн ретĕнче активлăн ĕçлес кăмăл мĕн тери пысăккине кăтартса парать. Çамрăк патриотсен çав паха шухăш-кăмăлĕсене комсомол организацийĕсен çывăххăн туйса тămалла, хăйсен речĕсене çамрăксенчен малта пыракан чи лайăх çынсене активлăн суйласа илсе явăçтармалла, çак майпа хăйсен речĕсене политикăпа организациллĕх тĕлĕшĕнчен çирĕплетмелле.

Ленин пире кирек мĕнле ĕçре те хамăрăн пуçарулăха, хамăрăн ĕçченлĕхе кăтартма, халăхăн ĕçне хамăрăн пĕтĕм вăйсене пама вĕрентет. Халĕ эпир тÿссе ирттерекен обстановкăра çакă вăл совет çамрăкĕсен мĕнпур вăйĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре пама кирлине пĕлтерет. Кашни çамрăк патриот хăйĕнчен хăй татах та татах çапла ыйттăр: «Тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте мĕн кирлине эпĕ пурне те турăм-ши? Хаяр кĕрешÿ самантĕнче эпĕ хамăн Тăван Çĕршыва татах та мĕнпе пулăшма тивĕçлĕ, мĕнпе пулăшма пултаратăп?»

Çак ыйту çине паракан ответ — совет çамрăкĕсен, большевикла парти, совет правительстви пăхса çитĕнтернĕскерсен, Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçне мĕнпур чун-чĕререн парăннăскерсен, çĕнĕ те çĕнĕ чаплă ĕçĕсем пулса тăччăр.

Пухнă тирсемпе çăмран çийĕнчех ăшă тумтирсем хатĕрлемелле

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Вырăнти комиссисем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме тăрăшнă çĕрте çак ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Август уйăхĕнче Етĕрне салинче 16 килограмм çăм, 24 тир пухăннă. Пухнă çăмран хĕрарăмсем алшишсемпе чăлхасем çыхма тытăннă. Алексеевкăри колхозра 21 тир, 8 килограмм çăм, 3 мăшăр алшиш пухнă.

Спирт заводĕнче, çу заводĕнче тата лесхозра ĕçлекенсем ăшă тумтирсем чылай пухса панă. Спирт заводĕнче — 50 тир, 11 килограмм çăм, çу заводĕнче — 17 тир, лесхозра 21 килограмм çăм, 7 тир, пĕр мăшăр ăшă кĕпе-йĕм тата ытти япаласем те пухăннă.

Районĕпе сентябрĕн 1-мĕш тĕлне 9 кĕрĕк пиншак, 205 тир, 150,5 килограмм çăм, 5 ваткăллă пиншак, 4 ваткăллă шалавар, 24 мăшăр алшиш, 18 мăшăр носки, 18 мулаххай тата ытти япаласем пухăннă.

Пухнă тирсене тума Етĕрне хулинчи «1-ое Мая» промысла артельне панă, çăматăсем йăвалама уйрăм мастерсене хушнă, вĕсене çăм уйăрса панă.

Кунпа пĕрлех çакна калас пулать: Мăн Шемертенпе Стрелецк колхозĕсенче ăшă тумтирсем пухма çеплах тытăнман-ха; райсовет исполкомĕн, хула совечĕн, вăтам шкулăн коллективĕсенче çак ĕç питĕ начар пулса пырать.

Нумай пулмасть ăшă тумтирсем пухас ыйтăва парти райкомĕн бюровĕнче сÿтсе-явса ку енĕпе мĕн тумаллине палăртса решени йышăнтăмăр.

Г. СПИРИДОНОВ,
Етĕрне районĕнче ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен комиссин председателĕ.

Отечественнăй вăрçă участникĕсен пухăвĕ

ТĂВАЙ. Çак кунсенче отечественнăй аслă вăрçă участникĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Вĕсем аманса е чирлесе тавăрăннă, халĕ тылра пурăнса суранĕсене тÿрлетеççĕ, колхозсенче председательсем, бригадирсем, звеньеводсем, кладовщиксем, счетоводсем пулса ĕçлеççĕ.

Пухура хальхи вăхăтри тапхăр тата умра тăракан задачăсем çинчен парти райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ И. Сергеев юлташ доклад туса пачĕ. Ун хыççăн пурĕ 8 çын тухса калаçрĕç.

Пухура чи малтанах отечественнăй вăрçă участникĕ, 1940 çулта белофиннсене хирĕç çапăçнă чухне паттăрлăх кăтартнăшăн Ленин орденĕ илнĕ, хальхи вăрçăра правительствăн иккĕмĕш наградине илме тăратнă Михаил Михайлов (Çĕнĕ Пуянкассинчен) тухса каларĕ.

— Эпир, — тет вăл, — тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн хамăр пурнăçа шеллемесĕр çапăçрăмăр. Халĕ, тылра пурăнма тиврĕ пулсан та, фронт пурнăçĕ çинчен манма пултараймастпăр. Ку вăрçăра тыл çук. Тылра та вăрçăри пекех кĕрешетпĕр. Çавăнпа та эпĕ, аманнине пăхмасăрах, колхоз производствинче активлăн ĕçлеме пулатăп.

Фронтовик танкист С. Михайлов юлташ çапла калать: — Фронта пулăшас тĕлĕшпе хамăн мĕнпур вăя паратăп. Эпĕ агроном пулса ĕçлекен Тăрмăшри сортлă тырпул участокĕ кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 23 центнер пухса илчĕ. Кĕр акине те ăнăçлă ирттертĕмĕр. Суранĕсене тÿрлетнĕ хыççăн эпир каллех фронта кайса, хамăрăн суранĕсемшĕн тăшмана тавăрăпăр, — тет С. Михайлов юлташ.

Çавăн пекех Кузьмин (Кивĕ Пуянкасси), Ильин (Çĕнĕ Пуянкасси) фронтовиксем те хăйсен ĕçĕсемпе шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç.

Райвоенком Сергеев юлташ çар ĕçне малалла та вĕренсе пырас, фронтовиксем хушшинче ĕçлес ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ.

Махоркăн лайăх пахалăхлă вăрлăхне мĕнле туса илмелле

Вăрлăх тума иртерех лартса хăварнă махоркăна суйласа илес пулать. Вăрлăхлăх хăварнă махоркăн аялти 3 — 4 çулçине татса пăрахмалла тата айккинчи кирлĕ мар турачĕсене, чечекĕ патĕнчи иккĕ туратсăр пуçне, иртсех тăмалла. Вăрлăхлăх акнă махоркăн участокне тĕтĕшах çумкурăксенчен тата махоркăн чирлĕ курăкĕсенчен тасатмалла.

Махоркăн вăрлăхне унăн чечекĕсем пиçсе çитнĕ май (вăрлăх хутаççисен çурри ытларахăшĕ саралсан) уйрăм участоксенчен пухса кĕме тытăнмалла. Кая юлса пухса кĕрсен, махоркăн вăрлăх хутаççисем çурăлаççĕ те вăрлăхĕ ана çинех тăкăнса юлать. Çавăнпа вăрлăхлăх махоркăна вăхăтра пухса кĕртмелле.

Вăрлăхлăх акнă махоркăна çулсăр хыççăн, вăрлăх хутаççисем типсе çитмен пулсан, пухса кĕртме те юрамасть. Вăрлăхлăх акнă махорка хăвăрт та тикĕс çитĕнтĕр тесен, ăна пухса кĕртес вăхăтчен 7—8 кун малтан çĕнĕрен хунакан çамрăк çулçăсемпе туратсен тăррисене иртсе пăрахмалла.

Махоркăн вăрлăхне тирпейлĕн, нимĕн тăккаламасăр пухса кĕртес пулать. Татса илнĕ вăрлăхлăх чечексене пиитĕ михĕсем ăшне е шал енчен пир çыпăçтарса хатĕрленĕ корзинăсем ăшне ямалла.

Вăрлăх чечекĕсене касса пуçтарнă хыççăн вĕсене ятарласа хатĕрленĕ çуртра капташсем çине çакса типĕтмелле. Типĕтнĕ чухне вĕсем çине шыв кайма памалла мар. Вăрлăхлăх махоркăн чечекĕсене типĕтмелли çуртăн урайне хăма сармалла. Çакна тума май çук пулсан, çĕр урайне пĕр шăтăк юлмиччен лайăх таптаса хытармалла. Çав çурта малтанах тĕплĕн çуса тасатас пулать, унта çÿп-çап та, ытлашши япаласем те ан пултăр. Вăрлăх чечекĕсене типĕтме кашта çине çакас умĕн, урайне брезент е шăналăк сармалла, çакă вăл тăкăннă вăрлăхсене йăлтах пухса илме май парать.

Типĕтнĕ чухне вăрлăх хутаççисем хĕрсе кăвакарасран сыхламалла. Хĕрме пуçланă вăрлăх хутаççисене çийĕнчех уйăрса илмелле. Вăрлăх хутаççин хуппи типсе хытсан, вĕсене çапас ĕçе тытăнма юрать. Çапасса вара тырă çапакан молотилкăпа (барабанне хуллентерех ĕçлеттерсе) е пĕчĕк чăмăр йывăççемпе çапма пулать. Çапнă хыççăн пухăнакан вăрлăха çийĕнчех веялка витĕр кăларса унти тусанран, хăйăртан тата вăрлăх хутаççин ÿпренчĕкĕсенчен тасатмалла.

Çапса тасатнă махорка вăрлăхне 9 процентран ытла мар нÿрлĕх юличчен типĕтмелле. Нÿрĕ вăрлăха купаласа е саппаласа вырттарма юрамасть. Махорка вăрлăхне иккĕ майпа типĕтме пулать: хĕвел çинче тата сушилкăсенче.

Махорка вăрлăхне уяр, хĕвеллĕ кунсенче брезент е шăналăк çине 5—7 сантиметр хулăнĕш сарса типĕтеççĕ, тăтăшах пăтраштарса тăраççĕ. Сушилкăсем çук пулсан, махорка вăрлăхне уйрăм пÿлĕмсенче те типĕтме май пур.

Типĕтсе çитнĕ махорка вăрлăхне типĕ вырăнта, С градусниккĕпе 0° градусран сивĕ мар çĕрте усрамалла.

И. ИВАНОВА,
«ВИТИМ»-ăн Мичуринскри вăрлăх базин заведующийĕ.

Ют çĕршывсенче

Пĕтĕм тĕнчери студентсен Вашингтонра пухăннă съезчĕ

СОВЕТ ДЕЛЕГАЧĔ ТУХСА КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Вашингтонра студентсен пĕтĕм тĕнчери съезчĕ уçăлнă. Çав съезда 365 студент пынă, вĕсем—53 çĕршыври студентсем, вăл шутра— США, Совет Союзĕ, Англи, Китай т. ыт. çĕршывсен студенчĕсем те пур; съездра тата нимĕçсемпе итальянецсен фашизма хирĕçле групписен делегачĕсем пур.

Совет делегацийĕнче — Красавченко, Павличенко тата Пчелинцев юлташсем; совет делегацине пĕтĕм съезд уйрăмах асăрхаса, кăмăлласа тăрать. Съезда уçнă чухне совет делегачĕсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Съездăн заседанине уçнă чухне США Верховный сучĕн членĕ Джексон çакна кăтартса панă: кашни хăйпе хăй лăпланса ларнипе тата фатализм пирки иртнĕ вăхăтра нумай поражени тÿснĕ. Вăл çапла каланă: демократиллĕ çĕршывсен ĕлĕк вăрçас кăмăл пулман, вĕсенчен хăшĕ-пĕри вăрçа пăрса ярас тесе Мюнхенпа та килĕшнĕ. «Студентсен съезчĕ хыççăн ĕçсем тусассăн,—тенĕ Джексон,—съезд вырăнлă пулать. Тĕнчери лару-тăру халь сăмах мар, ĕç ыйтать,—тенĕ.

Совет делегацийĕн руководителĕ Красавченко хăйĕн сăмахĕнче совет студенчĕсем вăрçăра мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каласа панă. Вăл çапла каланă: совет çамрăкĕсем Совет Союзне хÿтĕлекенсен малти ретĕнче тăраççĕ. Совет каччисемпе хĕрĕсем çĕршер пин çын гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçа хăйсен ирĕкĕпе кайса çапăçаççĕ. Совет çамрăкĕсем хăйсен тăван çĕршывне чунтан юратса тата тăшмана çавтери кураймасăр, гитлеровецсене вĕсен тискер ĕçĕсемшĕн тавăрма çунса тăраççĕ. Красавченко çапла каласа панă: 50 пин студент Мускав таврашĕнчи укреплениесене тăвас ĕçре ĕçленĕ, Мускав патне пымалли вырăнсем вара темиçе пин нимĕçшĕн масар вырăнĕ пулса тăнă. Мускаври çав студентсем çапла вара Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿллĕн контрнаступлени тума пулăшнă. Хальхи лару-тăру,—тенĕ Красавченко,—совет çамрăкĕсене те тата пĕрлешнĕ çĕршывсемпе ытти çĕршывсен, никама пăхăнманлăха хакла хуракан тата гитлеровецсен тарçисем пулас мар текен халăхсен çамрăкĕсене те пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлеме хушать. Хальхи вăхăтра Совет Союзĕ вăрçăн тĕп йывăрлăхне хăй çинче тÿссе ирттерет. Германин, Италин, Венгрин, Румынин тата Финляндин вăйĕсене вунă пайĕнчен тăхăр пайне Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăн фронтĕнче пухса тăратнă. Иккĕмĕш фронт çукки нимĕçсене хăйсен войскисене Европăран совет фронтне куçарма май парать, тенĕ.

Красавченко Европăра иккĕмĕш фронт тумалли задачăсем çинчен каланă чухне съездри çынсем ăна хĕрÿллĕн алă çупнă.

Съездăн пĕрремĕш заседанийĕнче президиум суйланă, унта кашни делегациерен пĕрер çын суйланă. Совет делегацийĕнчен президиума Красавченко юлташ кĕнĕ.

Карел-Финн ССР-ĕн оккупациленĕ районĕсенчи халăх захватчиксене кураймасть

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Фашистла «Фелькишер Беобахтер» хаçатра Финляндири тата Карел-Финн ССР-ĕн оккупациленĕ районĕсенчи лару-тăру çинчен статья пичетлесе кăларнă.

Гитлерла çыравçă çакна йышăнать: Финляндия вăрçăра питех те пысăк сухатусем тÿсрĕ, вăл çын çитменнине оккупациленĕ совет районĕсенчи халăхпа та саплама пултараймасть. Çакăн пек пулнин сăлтавĕ—çав халăх оккупантсене ытла та курайманни пулса тăрать. Хаçат хăй каланă тăрăхах, мĕнпур халăх партизанла движени тата саботаж тăвас ĕçе хутшăннă. Оккупациленĕ территорири пĕтĕм районсемех тĕрĕссипе «большевиксен аллинче тăраççĕ». Çав районсем вĕсем—партизанла районсем, унта оккупантсем ура ярса пусма та хăраççĕ.

Лару-тăру çавăн пек пулса тăнă пирки финсен влаçĕсем оккупациленĕ районсенчи халăхсене концлагерьсене хупма, унтан вара кам оккупантсене пăхăнмасть—çавсене пурне те тундрăна яма шут тытнă.

Авиаци виçĕ çул хушшинче тунă çухатусем

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви Англи авиацийĕпе тĕнĕл держависен авиацийĕ вăрçăн виçĕ çулталăкĕ хушшинче тĕрлĕ çĕрте тунă çухатусем çинчен официальнăй цифрăсем пичетлесе кăларнă.

Тĕнĕл держависен 8.984 самолет, Англи авиацийĕн 6.231 самолет пĕтнĕ.

Противникăн самолечĕсене Англи çинче 3.915 самолет, Германипе оккупациленĕ çĕршывсем çинче 2.487 самолет тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче 2.582 самолет персе ÿкернĕ.

Англи авиацийĕн Англи çинче 891 самолет, Германипе оккупациленĕ çĕршывсем çинче 3.837 самолет тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче 1.503 самолет пĕтнĕ.

ÇЫВĂХРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер импери войскисем Химейматпа туллă Рувей-Сат хушшинчи районра противника малалла хĕснĕ. Противникăн тĕп колонни кунĕпех майĕпен хĕвеланăçнелле куçса пынă.

Авиаци противникăн войскисем пухăнса тăнă вырăнсене ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă.

Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем сентябрĕн 1-мĕшĕнче Крит утравĕ çинчи Кания гаванĕнчи портăн сооруженийĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем тăвата е пилĕк суднăна тÿрĕ лекнине палăртнă.

Тĕнĕл держависен суднисен караванĕ çине бомбăсем пăрахнă вăхăтра та хăшпĕр бомбăсем тÿрĕ лекнине палăртнă.

Противникăн самолечĕсем Хайфу çине вĕçсе пырса тапăннă. Вĕсем кÿнĕ сиен пысăк мар, вилнисемпе аманнисем çук.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Соломон утравĕсен архипелагĕн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи хăшпĕр утравсем çине войскăсен пысăк мар чаçĕсене антарма темиçе хутчен хăтланса пăхнă. Америкăн Гвадалканар утравĕнчи аэродром çинче тăракан самолечĕсем японецсен десант антарнă карапĕсене атакăланă. Бомбăсем тÿрĕ лекнисене палăртнă. Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс пехоти японецсен анса юлнă чаçĕсене хирĕç çапăçнă.

Япони авиацийĕ Америка войскисен Гвадалканар утравĕ çинчи позицийĕсене атакăлама темиçе хут та хăтланса пăхнă, анчах та ĕçĕ ăнман. Союзниксен самолечĕсем Бук утравĕ çинчи аэродрома вăйлăн атакăланă.

ЯПОНИПЕ КИТАЙ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂ

Китай командованийĕн даннăйĕсем тăрăх, Китай войскисем Гуандун провинцинче наступлени пуçласа ярса Кантон еннелле куçса пынă, вĕсем Лубао хулине йышăнса илнĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

На постоянную работу в Чебоксарах требуются: электромонтеры, слесаря, машинисты, сливо-наливщики, приемо-сдатчики, завхоз — зав. материальным складом, дорожный мастер, шофера, охранники, зав. столовой, повар, буфетчица, инспектор по кадрам, секретарь-машинистка, бухгалтера, табельщик, уборщицы и другие рабочие.
Обращаться по адресу: деревня Аникеево, п/я. №-14.

Чувашскому отделению «Росснабсбыт» требуются: товароведы, бухгалтера, нач. планового отдела, кладовщики, шофер, возчики, охранники. Оплата по соглашению, квартирой обеспечиваются. Обращаться: г. Чебоксары, Красная площадь, 19.

Филиал Горьковского Электромеханического техникума НКЭП продолжает прием заявлений.
Техникум без отрыва от производства готовит техников-технологов по холодной обработке металлов резанием и давлением и техников-электриков по аппаратостроению.
Срок обучения 4 года.
В техникум принимаются лица без ограничения возраста, имеющие образование в объеме 7 классов средней школы.
Заявления о зачислении в техникум подаются на имя заведующего филиалом с приложением: автобиографии, свидетельства о рождении, справки лечебного учреждения о состоянии здоровья, справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), трех фотокарточек.
Вместо свидетельства о рождении, граждане, достигшие 16-летнего возраста, предъявляют паспорт при личной явке.
Лица, окончившие 9 и 10 классов средней школы, принимаются без приемных экзаменов на 2-й курс.
Производится прием заявлений на 3-й курс от лиц, имеющих соответствующие знания.
Оплата за обучение в техникуме 75 руб. в год.
Заявления принимаются ежедневно от 18 час. до 19 час. в помещении бюро пропусков завода (ул. К. Маркса, 80).
3—3. ЗАВ. ФИЛИАЛОМ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 822 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.